23—24-мĕш №. Хакĕ 5 пус. 1931-мĕш çул. Теккапĕр.




Елменшĕнĕ:—Ĕăваш респуплĕкĕн промышлĕннăç калама çук пысăк хăвăртлăхсемпе ÿссе пырать, теççĕ. Ман ĕÿреĕерен курăнмаçтеха вăл ÿсĕм!?.

# Истори хапрăкĕ

Куртăр есĕр пирĕн тимĕр-тăмăр шăратакан савăтсене, куртăр трактăрпа компайăн савăђĕсене, куртăр çĕнĕ електростантсисене, куртăр кикант совхоссене—аш, тĕштыр хапрăкĕсене... Халĕ ĕнтĕ епĕр сирĕнпе пĕрле ђи аслă хапрăк патнелле, пирĕн строиттĕлствăн ђĕрипе мими патнелле пыратпăр. Историйе шăратса кăларакан хапрăк патнелле çывхарса пыратпăр епĕр утса!

— Апла... историйе хапрăкра тăваççи?

— Ăна... мĕнле калас, кирек ăçта та тăваççĕ те... Хапрăксенђе те, хуласенђе те, йалпа колхоссенђе те. Анђах кунта епĕр пахаран та паха, тĕпре ларакан хапрăк, пур вырăнсене те електритсă вăйĕ парса тăракан вăйлăран та вăйлă хапрăк çинђен калаçатпăр сирĕнпе...

— Тăхтăрха, ыйтса ђăрмантарамха сире... Мĕн йатлă вара вăл хапрăк?

— Йаđĕ унăн—Пĕтĕм Сойусри Комуниссен (полђшевиксен) Партти.

— Мĕнле вара вăл ĕçлет?

— Авă, пăхăр хăвăрах... çывăхнерех пырса тăрса пăхăр.

— Тĕлĕнмелле! Питте çивĕђ, питте ăста, питте вăйлă, питте ăнăçуллă ĕçлесе тăратĭçке вăл! А миçе çын унта ĕçлеççĕ?

— Икĕ мĕлйун ытла.

— Охо! А вĕт пурте пĕр виçепе, пĕр тонпа, пĕр орканисăм пек ĕçлеççĕ! А?! Тăхтаха... А унта, лере, сулахайра пĕђĕк пулккă етемсем шавлаççĕ, кускалаççĕ. Камсем вĕсем?

— А! Ну, вĕсем уш хапрăк тулашĕнђисем. Клас сисĕмне çухатнисем, хапрăкран тухнисем... хапрăка тивĕçлĕ маррисем. Вĕсем вырăнне, авă куратăр хăвăрах, ыттисем, ђăн-ђăн рапођђисем, кĕрсе пыраççĕ...

— А лере, сылтăмра? Камсем вĕсем? Мĕн пирки унта темĕскерле йышши çынсем упаленеççĕ, антăхса кайса ишеççĕ, ту çинђен айалалла шывы-шыва анаççĕ? Хăрушăрах, кусем сăнсăпђĕсенђен пăхсан, леш, сулахайрисенђен... Ахăрашаççĕ. Мĕнле те пулсан пĕрпĕр авари пулни мĕн?

— Нимĕнле авари те пулман. Хăвăрах куратăр, истори вĕт пирĕн вăйлăн, полнăй хотпах малалла кайса пыраŤ. Çав çынсем истори машшинине тытса ђарма, ăна кайалла çавăрса йамя тăрмашаççĕ. Ну, вара вĕсем хăйсемех... айăккала çавăрăнса кайнă. Ђăнкă çыран хĕрринђен шывалла, шурлăхалла...

— Вот ухмахсем!

— Çук, ухмахах мар вĕсем. Пит ђейескерсем, хăрушăскерсем. Ыттисем вĕсене кирек хăçан та асăрхаса, вĕсемпе çине тăрсах кĕрешсе пыман пулсан, хапрăкри вăйлă енерки пур çĕре те вăйлăн сарăлса çитсе пур вырăнсенђе те тулли тăман пулсан, вĕсем пире нумай сийен кӳнĕ пулĕђђĕç... Сийенĕ...

— Тата каллех пӳлсе ыйтарха сиртен: мĕнле йышши енеркипе хапрăк усă курса ĕçлесе пыраŤ?

— Тĕнђери ђи вăйлă, нихăçан пĕлмен енеркипе: мĕлйунлă массăсен пĕр çĕре пĕтĕçнĕ ирĕкĕпе! Акă халĕ историшĕн калама çук паха, аслă вăхăт çывхарса çитет; çавă епĕ асăннă ирĕк хађхи вăхăтра тĕреклĕнтерех пĕрпĕрипе пĕтĕçет, çăраланаŤ, вăйне пухаŤ... Акă! çĕнĕ таттă (дата) никĕсе хывăнаŤ, тĕнђе историн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланаŤ. Есĕр куратăр хăвăрах—иртнĕ тапхăрсен хисепĕсене, исторлĕ стантсисенђен тухса кайнă ĕлĕкхи çулсене,—вĕсене çав епĕ асăннă ирĕклĕх вăйĕ тĕрекĕпе туса çĕнĕрен-çĕнĕ тапхăрсем çине куçарса пынă. 13-мĕш, 14-мĕш, 15-мĕш, 16-мĕш. Куратăри авă малта, сотсиалисăм çурђĕн никĕсне хывса пĕтереççĕ.. Куратăри мĕнле хăвăрт, мĕнле тӳрĕ ун патнелле истори çулне хываççĕ?.. Авă ĕнтĕ халех...

— Мĕн ку? çĕнĕ тапхăр? Авă, çĕнĕ тимĕрсем хунă çĕрте... Авă унта, вунулттăмĕшĕнђен малтарахра, вунпиллĕкĕмĕшĕнђен ђылай малта?

— Вунçиђђĕмĕш сиес!





# Пуйăс çинţĕ

Тĕрек çак пуйăс çине ларни вунтăватă çул иртрĕ ĕнтĕ. Васкасах хăй кайас тенĕ çĕрелле сĕтĕрет ăна пуйăс. Калама çук хытă ţупнипе Тĕрек темиçе хут ўксе йулма тапратнă та, анţах ăна çынсем тытса пулăшнипе, йе тата ăçтан та пулин çакланнипе ку тарана ţите ларса пыркаланă. Йулашки стантсăна çитес умĕн ăна хăйсен йалĕнţи Тамей кулак тĕксе йамах тытăнă пулнă, анţах ăна Тедей колхоçнĕк курса çăлса хăварнă. Çавăнтан кайран Тĕрек ţиперех ларса пыţĕ. Савăнţĕ вăл йулашкинţен. Çитменнине пуйăс çинţи колхос йатлă пўлĕмре ларса пыма питех те аван пулнă мĕн ăна. Унта Тамейсене те кĕртмен, çавăнпа ĕнтĕ Тĕрек ку пўлĕмрен ниçта та тухма шутламаст.

Çав пўлĕме кĕрсе ларсанах Тĕрек ĕлĕкхисене аса илме пуçларĕ. Вăл çак пуйăс килекен малтанхи стантсинţен пуçласа ку тарана çите мĕнле килнине пайанхи пек аса илţĕ (Расйессене маннă, хăшне курайман).

* * *

..Пĕрĕмĕш стантси. Пуйăс тапранţĕ. Анţах пуйăса ţупма ку вăхăтра калама çук наţар пулнă. Ăшăтмалли сахал пулнă, йĕри таврăх шурă кашкăрсем уласа ţупнă, çулĕ те тумхахлă пулнă. Кун ţухне Тĕрек хăй те Тамейсемпех ларса пынă. Мĕншĕн тесен, колхос йатлă пўлĕмсем ун ţухне пулман. Çавăн пекех, пуйăс çинţе ун ţухне çутă та сахалтарах пулнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, Тĕрек пурнăçĕ пуйăс çине ларичченхинţен те наţартарах пулнă.

Тĕрексен пуйăсĕ иккĕмĕш стантсине çитсе кĕнĕ. Ку стантси умне—„10 мĕш с й е с" тесе çырнă. Çакăнта çитсен вара Тĕрек пурăнăç аванлана пуçланине туйма пуçланă. Вара пурнăç аванланнă çем аванланнă, пуйăс ţупнă çем хытăрах ţупма тытăннă.

Тĕттĕмрех, сĕрĕмлĕрех пулнă пирки Тĕрек „15-мĕш с й е с" йатлă стантсăна çитеççен питех сăнаса пыман. Çав йулашки стантсăна çитсен анса пăхнă та „Тĕштыр проплемми" капан пек сарăлса тăнă. Анţах унтан пысăк пулсан та пуйăс та, çынсем те хăраман. Унпа ţылайĕшĕ кĕрешме хатĕрленсе вăй пухнă. Çанăсене таврнă. Кун ţухнех „Тĕштыр промплеми" ţĕрей хăранипе тапа пуçланă. Çавăнпа унтан Тĕрек те хăрама шутламан. Анţах вăл пуйăса ţарса лартма пултарĕ тесе шикленнĕ.

Пуйăс тăхтамасăрах малалла ţупнă. „Тĕштыр проплемми" пуйăспа тата тепĕр стантсине çитех тавлашса пынă. Йулашкинţен вара ăна пуйăс таптаса çĕмĕрсе хăварнă. „Тĕштыр проплеммăн" ванţăкĕсем „Колхос" йатлă вакунсем айпе шăвăнса йулнă. Вĕсем те „пĕţţен хуçалăх" текен шăтăксенţе кăна пытанкаласа хăйалнă.

Пуйăс хăвăрт „16-мĕш с й е с" йатлă стантсăран та иртнĕ. Кунта татах тĕлĕнмеллисем нумай пулнă (сĕрĕмлĕ пирки). Пур çĕрте те пўлĕмсене «колхос» йат пара пуçланă. Пуйăс «тĕштыр проплеммине» татăклăнах çĕнтернĕ пулин те, ун хыççăн тата «выԓăх-ţĕрлĕх проплемми» тата пысăккăн сиксе тухнă. Кăна çĕнтерме йăвăртарах та пулнă. Вăл пуйăспа вирлĕн кĕрешсе пынă. Кунсăр пуçне, пуйăс çине малтанхи стантсăра 1040 ушкăн трактăрсем, 518 хăпрăк-савăт тийенĕ. Çавăнпа та пуйăс, хăй пуйанланса пынă май, туртса пыма çăмăлах та пулман. Йăвăрлăхсем ţылай пулнă. Апла пулин те Тĕрексен пуйăсĕ „17-мĕш с й е с" йатлă стантсине çитес умĕн, „выԓăх-ţĕлрĕх проплеммине" аманта пуçланă. Хăш тĕлте нĕр хуллине татса илсе „силос" текен шăтăка, тепĕр хуллин хăшпĕр пўрнисене татса илсе «нумай пусăллă уй-хир», йе «фермă» текен шăтăксене пăрахса хăварнă. Çапах та вăл «17 ш с й е с» йатлă стантси патне çитех кĕрешсе пынă.

Çав стантси патнĕ çитерехпе Тĕрек пĕринпе калаçма тытăннă.

— Хаԓ епĕр мĕнле респуплĕке, йе оплăçа пырса кĕретпĕр, тенĕ. Лешĕ ăна йĕркеллĕн, ăнланмалла каласа панă.

— Епĕр хаԓ «реконструкси тапхăрĕ» йатлă вырăнтан тухса, «Сотсиалисăм тапхăрĕ» йатлă вырăна кĕтĕмĕр, тенĕ. Çав сăмахсене илтсен Тĕрекĕн, вăл хăй 60 çула çитнĕ пулин те, татах малалла кайасси килнĕ. Вăл:

— Ку «совет власĕ» пуйăс пит те хăвăрт ţупать мĕн... ахаԓ мар кунта кăţакарĕсем партти йатлă, тесе шутланă.

Çапла майсемпе Тĕрек «17-мĕш с й е с» йатлă стантсине пырса кĕнĕ. Ку стантсинţе Тĕрексен пуйăсĕ малалла кайас çулсене пăхса тухмалла, тата нумайрах вăй пухмалла.

В. Сиçĕм.



-..—Ыран раштав. Ыран таса хĕр Марийа, таса сывлăшăн сĕткенĕ хăвăҫĕпе ўтленсе христуса кĕтмен ҫĕртен сырăш ҫине ҫуратса пăрахнă кун. Ђисламаллаиха ҫакă куна пирĕн?.. тесе хăйĕнђен хăй ыйтнă Кара

## Ђас тапранса тухманнине сисесрен

Кашни пушара тенĕ пекех Щупашкарти пошарнĕксем пиг кайа йулса тухаҫҫĕ.



*Хула ҫынни.* Ей, пошарнĕк, пошар тухнă курмастăни? Ма ђанне ҫапмастăн?

**Пошарнĕк.** Ђанне пошарнĕксем пушара кайма хатĕрленсе тухсан тин ҫапатпăр. Халĕ вĕсем пушара кайма ђей ĕҫеҫĕха, унтан апат ҫийеҫҫĕ, вара... ҫапма та йурать...

Елекҫейĕ. —Ҫук, пулмасть. Халăх (3-4 карђăкпа стариксем М. П.) ирĕк мĕн калатăр. Виҫĕ уйăх ђупса, пĕр пуп тĕл пулаймарăм. Неснай ăҫта кăна пытаннă вĕсем? Ĕшентĕм ĕнтĕ тупата. Каплах пулсан тĕнђе те пĕтет пулĕ. Тухагăп ку вырăнтан. Ăҫта та пулсан пухалттĕре кайас луђĕ.

Ђылай антăраса ларнă Кара. Шухăша тĕрлĕ май ҫаптарса, тĕрлĕ сăлтавсемпе сўтсе-йавса пăхрĕ. Ђиркў старăстинђен пĕрре тухам та тесе шугларĕ. Анђах ĕҫ тухмасть. Пĕрех ниăҫта та вырăн памĕҫ, терĕ вăл йулашкинђен.

Ĕҫ ҫук йеване шкапĕнђен пĕр ҫĕтĕк хупăллă йеванкĕни кăларса сасăпах вула пуҫларĕ. Вăл каҫ ăна кансĕрлекен никамах та пулман. Арăмĕ харăлтаттарса ҫывăрнă. Хĕрĕ урама йаранма кайнă пулнă. Ҫавăнпа та ирĕк Елекҫейĕ. Райри условисенђе кĕнеке вулать вăл.

Матвей, Лукка, Иоанн ҫырнă паракрăфсем. Нуккă, Каралĕ, ак ҫак тĕле вула халĕ, тенĕ пекех йăпăлтатнăн туйăннă Елекҫейе.

Лукка ҫырнă калавăн 13-мĕш паракрăфĕ тĕлне ҫитсен, Елекҫей ђылайђен шухăша кайса ларнă. Ик-виҫ кут вуланă вăл тĕле.

..„Арҫын хĕрарăмшăн ҫуралман—хĕрарăм арҫыншăнҫуралнă, ҫавăнпа та унăн мĕн тупăка кĕрсе выртађђенех хăйĕн машăрне пăхăнса пурăнмалла" тенĕ паракрăф.

— Ђăн ку, тенĕ Кара:,—Конешнă... Мĕн вăл хĕрарăм?.. Тăр-ха, карђăк—тенĕ вăл арăмин ҫиптунинђен йавкаласа илсе. —Нуккă, ставай прокђатйĕм... Миҫе килокрам ҫывăртăн кĕҫĕр, а епĕ пĕр крам та ҫук. Тăрха!.. Тул ҫутклатђен пĕр тĕнђе те йулмалла мар. Йеванкĕли калать, йеванкĕли!.. тесе йантăратнă ђитаттĕл.

Арăмĕ сехĕрленсе тăрса ларнă. Унăн ыйхăпа тармакланнă траххумлă куҫĕсене лампăă ҫути атма виттĕр пăхнă пек куранннă. Хăмăр тĕсевлĕ ҫўҫĕ урăм-сурăм арпашăнса кайнă. Вăл ҫўҫ ăшне пĕр хăнкăлана хўртсе йарсан алтăвипе ҫапсан та тухайас ҫук. Ҫак ҫўҫрен ĕнтĕ йăлмакласа илђĕ Елекҫей.

—Йар... ҫўҫе!—терĕ арăмĕ. Елекҫей йађĕ.

— Вот кала, карђăк!.. Мĕн пур ҫылăхусене пĕр пытармасăр ҫак таса йеванкĕли умĕнђе пат татăклăр каласа ўкĕн. Хĕр ђухвехи ҫылăхусене те ан хăвар. Кĕҫĕр тĕнђе пĕтмелле. Лукка каланă тăрăх кĕҫĕр тул ҫуталађђен пĕр пĕрђĕ тĕнђе те йулас ҫук.

Арăм сехĕрленсе кайрĕ.

— Хĕр ђухне ҫылах туман пулĕ еп...

— Вот кала ҫав,—ђĕптет Кара—кам та пулсан сана йуратмани? Кам та пулсан сана кађђа илесшĕн пулмани? Веҫех кала, веҫех... Ак ăш тăвăлса килсе пуҫларĕ... Пĕтет, тĕнђе пĕтет...

Елекҫейрен урлă пĕр шит кайма хăйайман хĕрарăм ђăнахах та тĕнђе пĕтет пулĕ тесе, хăйĕн „ҫылăхĕсене" кала пуҫларĕ.

— Куршук Кĕркури кађђа илесшĕнђĕ, жу та пĕлетĕн,—тесе йађĕ вăл.

— Такс... Унпа, санăн конешнă хутпăлнусем те пулкаланă пуђ... Клавным опрăсăм ҫавсене веҫех кала.

Питĕ пысăк çылăхсем вĕсем. Çутăлаҫҫен каласа йул.
— . . . . . . . .

— Кĕпĕне хывха... Таса çан çурăмпа кала. Ку кĕнеке умĕнҫе сантал кĕпепе тăни, таса хĕр Марийана калама çук кăмăлсăрлантарать...

— ... Есĕ те кĕпĕне хыватнам?.. терĕ арăмĕ—Елексçей пилĕкĕнҫи пиçихи салтăннине курсан, Анҫвх тимĕр тăхаллă пиçихи кĕпе хывас сăлтавпа мар, православнăй кĕвĕ калама салтăннă мĕн. Акă ун кĕвви. Акă такмакĕ унăн·

Акă сана каҫҫă,
Акă Кĕркури:
Акă сана хĕр ҫух,
Ашкăнса çӳрени!.. Иавкаланать тăхаллă пиçихи. Авкаланать çара çан...
Акă сана тĕнҫе...
Ак сана пĕтет!.. Пиçихи айĕнҫен хĕрлĕ йун пĕрĕхет. Ҫылайҫҫен ăшаланҫĕ арăм çатма çинҫи пăрса пек. Мĕншĕн тесен арăм уншăн çуралнă, Елексçей арăмшăн мар.

Кунпах ҫун канмасть Каран. Арăмне вăл тепĕр наккасани парать. Ун арăмĕн кĕçĕр таса пусăран хĕрĕх те пĕр витре шыв кăларса таса йур çине сапмалла,—вара тин хĕр ҫухневи «çылăхсем» çырлахаççĕ.

Пус тараси ҫăн-ҫăнах ҫĕриклете пуçларĕ. Арăм «çылăх» каçарттарать.

Кара вулать... Ҫаранмасăр вулать кĕнеке. Кусĕ хупăнать пулсан та—вулать... вулать...

Йараннаран ăшăрхаса тавранă хĕрĕ те «таса аттерен» наккасави тӳсет. Ун сăлтавĕ пысăк мар. Йаранма кайнă ҫух, ашшĕне йевитсĕр кайнăшăн çех. Çавăнпа та, «çылăхне» кура наккасĕ те пысăк мар, Пăлари вакăран пĕр витре шыв пĕр пĕрҫĕ çӳп-çапсăр ăсса килсе ашшĕ умне лартасси...

...Наккассем вăхăтра пурнăçланнă. Кара ҫунĕ каннă. Хĕпĕртенĕ вăл. Анҫах, çапах та ун пуçĕнҫе куштăн Куршук Кĕркурин măшкăлавлă сăнĕ çухалман. Ирĕксĕрленсех шухăшланă вăл ун çинҫен...

Умĕнҫи лампă пусăрăннă çемĕн пусăрăнса пынă...

— ...Краççын çук... Урăх çутасси пулмасть ĕнтĕ. Тăвар та ак ҫас пĕтет... Вăрçă пуçланнă. Арханкĕлскине туртса илнĕ, Пакку та пирĕн мар, тесе хăйне хăй мăкăртатса ларнă Кара. Арăмĕпе хĕрĕ кăмака çинҫе шăл шаккаса выртнă. Кара пĕтĕм тăлпăвĕн çурри таран авăна-авăна сăхсăхнă.

Тул çутăла пуçланă. Сивĕ. Сурса çурҫăк ӳкмест темеллех мар та, çапах шатăр сивĕ çав. Елексçейĕн çемйи ыйăхран вăранса анаслана. Сивĕрен те хăраман, темĕнле ухмах автан, тул çутăлнă хавaспа, лупас айĕнҫе: ку-ку-ре-к-ку! лесе аватни,—Елексçейе: Кур шу-к Кĕр-ку-ри-и-и! тенĕ пек мăшкăлавлăн туйăннă.

Елексçей арăмĕ кусуй хупписем уçма тухсан, ăна копператтив йенне йăраланса пыракан 8 йывăр лав тĕлĕнтернĕ.

— Мĕн тийерĕр?!..

— Краççын... ответленĕ 8 лав.

Арăм каллех шанмасть. Тĕнҫе пайан ҫăнахах та пĕтмелле... Мал йенелле пăхать... Мал йевҫен пĕтсе килет тесе ĕнентернĕ ăна Елексçей.

— Ах, ҫăнласах!.. Тытăнҫĕ иккен, тытăнҫĕ... Елексçей!.. Елексçей!..

Антăранă мĕскĕн хĕрарăм. Анҫах ăна ҫасах тăн килсе кĕрет. Мал йенҫе мăкăрланакан кăвак тĕтĕм—кохос крахмал савăҫĕн çăварĕнҫен палкаса тухать иккенне Кара арăмĕ ҫасах тавçăрса илнĕ.

Митта Петĕрĕ.

# Йăлăнакан

Ҫăваш республĕкĕнҫе кĕреçе çăнăхĕ пухас плана йанварĕн 1-мĕш тĕлне 32,7 проҫҫăн çеç тултарнă. Ҫи кайра пыракан районсем: Хĕрлĕҫутай (11 проҫҫăн çурă), Тутаркас (16 проҫҫăн çурă ытларах), Елĕк (22,7 проҫҫăн), Шăнкăртам (23%).




**Кĕреçе çăнăхĕ:**—Тырă хатĕрлекен муҫей, илсе кайха мана та хăвпа пĕрле...

**Тырă хатĕрлекен:**—Е-ей, санпа аппаланатăпи ара!..

# Раман тумлантӗ



Тӳпере хулӑм та, тискер хура пӗлӗтсем картлам, картламӑн йӑсӑрланса шӑвӑнаҫҫӗ. Таҫта васкаҫҫӗ вӗсем. Ҫавӑнтах тарӑн шухӑш ӑшне путса тапаҫланса ларакан Раман айӗнҭи ҫӳл ту та темӗскер йӑшӑлтатнӑн туйӑнса кайрӗ.

— Мӗнмаха килнӗ епӗ кунта?.. Кам илсе килсе лартнӑ мана ҫакӑ ҫӳл ту ҫине?.. тесе хайӗнҭен хӑй тӗлӗнсе шухӑша кайса ларнӑ Раман. Ҫавӑнтах тӗрлӗрен илемлӗ йӑрансӑр уй-хирсем, йешӗл тумлӑ вӑрмансем, вӑрмансенҭе тарӑн та хӑрушӑ ҫырма ҫатрасем Раман куҫӗ умӗнҭен капланса иртсе пыраҫҫӗ.

— Ниушелӗ ҫаплах-ха?.. Ай, хай-й-й!.. Ниушелӗ пулӑшмастӑр?.. (Кама калатӑпха... никам та ҫук..) Ниушлӗ епӗ кунта пӗҭенех?.. Ҫийет вӗт ку, ҫийет!.. ырӑшӑнах килмест пуԓ ахӑр,—тенӗ май ҭӗтренсе сив ҭир пек халтӑраса ларнӑ Раман, хӑй йенелле йӑраланса хӑпаракан сысна аҫине курсан.

Сысна йерипенӗн пырса Раман умне каркаланса тӑҭӗ. Раман ӑшӗнҭи халтӑру кӗвви вӑйлӑланнӑҫем вӑйланса кайрӗ. Ҭӗтӗрет вӑл. Шӑлне шаккат. Хӑмӑр тӗсевлӗ куҫӗсем урмӑшса ларҭӗҫ.

— Мӗске-е-е-р!—тесе хайаррӑн ҫухӑрса йаҭӗ Раман.—Мӗскер тӑвасшӑн есӗ мана?

Сысна ҭӗнмест. Вӑл хусканмасӑр тӑрат. Раман ӑна хайӗн сысни иккенне тавҫарса илҭӗ.

— Ниушелӗ,—тет Раман.—Ниушелӗ вӑл кунта килме пултарнӑ?.. Ӑна епӗ пуснӑ вӗт пайан. Тирне ӗнтсе ҫунтарса йани те ав паллах. Кӑмрӑклансах вӗт кайнӑ.

— Харт!—турӗ сысна.

— Мӗске-е-е-р!—ҫухӑрса йаҭӗ Раман.

— Айта утлан!..

— Мӗскерлеха есӗ?.. Сысна вӗт есӗ?.. Мӗнма калаҫатӑн?..

— Айта утлан...Пес расковор.

Раман утланҭӗ. Сысна ҫил ҫуналла пӗрӗхтерет ҫех малалла... Ниушелӗ сысна?.. Раман ӗненмесӗр тепӗр хут унӑн тирне хыпаласа пӑхрӗ... Ҫавах. Пайан хам ӗнтсе йанӑ сыснах. Ӑҫта илсе кайатши?.. Раман ҭӑнласах аҭа пек макӑрса йаҭӗ.

— Ӑҫта илсе кайатӑн?.. Тархасшӑн хӑвар. Какайу та, ху та кирлӗ мар.

— Айта пес расковор. Есӗ испаҭсен, уҭиттӗлсен сӑмахӗсене итлеместӗн. Айта хаԓ ху куҫупа хӑвна кӑтартам.

Йӗрет Раман. Сысна ланклатса ҭупнӑ май, вӑл ӗсӗклесе макӑрса пырат.

— Пашалстӑ хӑвар. Ху пӗҭен кай. Кирлӗ мар мана есӗ.

— Харт!.. А-а-а... Шалиш прат, терӗ сысна. Урӑхран вӑл шарламарӗ.

...Ҫитрӗҫ, ҫитес ҫӗре. Раман веҫех тӗлӗнсе хытса шанса кайрӗ.

— Ӑҫта илсе килҭӗ мана ку пӗр самантра?..

Ун умӗнҭе савӑт корппусӗ. Вӗҫӗмрен тӑсӑлса ларса кайнӑ илемлӗ ҫуртсем. Савӑт тӑринҭи вӑрӑм хура трупаран ҫӑра тӗтем ҫӗлӗк пек палкаса пӗлӗте туртӑнат. Акӑ крусовик автомопил Раман ҫумӗнҭенех сӗртӗнсе иртсе кайрӗ.

— Пӑх, лайӑхрах. Мӗн тийенӗ вӑл?—терӗ сысна.

— Тир. Сысна тирӗ, терӗ салхуллӑн Раман.

— Тоттӑ. Сан пек ӗнтмеҫҫӗ ҫав...

Раман ҭӗнмерӗ. Пӗрре савӑт ҫине, тепре хӑйпе калаҫакан кӑмрӑк тирлӗ сысни ҫине пӑхса илет. Савӑт ӑшне кӗрсе кайрӗҫ. Сысна ӑна ҫул кӑтартса йертсе ҫӳрет. Акӑ тир. Сыснасен тирӗсем. Йепле вӗсене йакатса ҫемҫетеҫҫӗ. Акӑ тепӗр алӑк. „Екскурсантсем“ ҫакӑ алӑкран кӗрсе кайрӗҫ.

Атӑ, поттинкӑ, алса тулӗсем... Тӗрлӗрен сарӑ та, илемлӗ сӑрансем купаланса выртаҫҫӗ кунта. Пурне те (лайӑх йышшисене) сысна тирӗсенҭен тӑваҫҫӗ вӗсене.

Раман ытараймрсӑр уринҭи ҫӑпатисене салтса пӑрахса пӗр мӑшӑр атӑ, вӗр ҫӗнӗ сӑран атӑ тӑхӑнса йаҭӗ.

Ҫул ҫинҭе шӑнса кӳнтӗркенӗ аллисене сарӑ сӑран алса тулӗ тӑхӑнтартрӗ.

Сысна ун ҫине пӑхса, кӑмӑллӑн тарӑхса кулса тӑрат.

— Арӑму ваԓҭи поттинкӑ ил, терӗ сысна.

— Вернӑ, ҭӑнах.. Хаԓте астутартӑн.

Илҭӗ Раман. Хӗстерҭӗ хул хушшине поттинкӑ та. Каҭӑ... Вунҫиҭ ҫулхи каҭӑ тейӗн.., тӑрӑххӑн пӑхса илҭӗ Раман. Тумлантӑм. Йепле илемлӗ те, йатуллӑ.

Ҫав вӑхӑтрах Раманӑн кунҭула ҫитсе пӗрре атӑ тӑхӑнса курнӑ урин тупанӗсем темӗскер сасартӑк кӑтӑкланса кайрӗҫ.

Мӗскерле капла?.. Раман ҫаврӑнкала тӑрат. Тӳсеймерӗ вӑл. Урисем ыратнӑҫем ыратуллӑн кӑтӑкланаҫҫӗ. Хывса пӑрахрӗ атта. Хываннӑ атӑ кӗлли Раманӑн ҫамккине пырса ҫатлатрӗ.

— Акӑ сана!—тет атӑ.

— Ҫат!—тутарҭӗ пит ҫӑмартийӗнҭен алса тулӗ.

Раман пӗрре хӗрелсе, тепре шуралса симӗс-кӑвак тӗсевлӗн пула-пула кайат.

— Сан арӑмушӑн епӗ ҫӗленме-е-н!—тесе йӑшӑлтатса ҫухӑрат хул хушшине хӗсӗннӗ поттинкӑ.

— Ӑ-ӑ-ӑ!.. Нӑри-и-ик!—тет кӑмрӑк тумтирлӗ сысна.

— Виле-е-еп!—тет Раман.—Вӗлере-е-еҫ!..

— Айтаха сана ҫакса хурса купарҭуна ӗнтем, тесе нӑриклетнӗ сысна. Ун аллинҭе сарӑ ҭӗн урхалӑх. Ҫав ҭӗн урхалӑхпа ҫакасшӑн пулнӑ Рамана.

Раман хытӑран хытӑ хайаррӑн ҫухӑрса „тамӑк“ саслӑн кӑшкӑра пуҫланӑ. Ун майӗнҭен ҭӗн урхалӑх пӑвса илсен кӑшкӑрма ҭаранса, инкеклӗ ыйхинҭен вӑранса кайнӑ.

— Ӑҫта, епӗ ӑҫта?!.. Вӑл хӑрушла калаҫнине илтсен ҫумӗнҭи арӑмӗ те хӑвӑрттӑн тӑрса лампине ҫутса йаҭӗ.

# Йави ăшă та...

— Во-во-во! Такс-с-с. Ну пулђĕ те пирĕн. Çитрĕ пурнăç. Кĕтсеђĕ кăва... Ђылайравпах...

— Ех, ушăнсађĕ те уншăн. Темпе пĕрех вĕт. Кӳ таранђен мĕн ђухлĕ кĕтнĕ те вĕсене.

— Руководствă хамăрăн пулаĭ. Хамăр çынсем хамăр йенеллех пулмалла вĕт!

— Конешнă, хамăрăн. Прорыв тăватпăр. Сийенлетпĕр... Ку ăçтан май килсе пыраĭ. Телей та пирĕн, çав тери пысăк! Ох пысăк, пысăк!.. Ăçта кайса кĕресех. Тĕп сакайне сикемех. Пĕтрĕмĕр хĕпĕртенипех. Ох!..

Тепĕрт-тепĕрт сиккелесех, урасене мађђана тапсах çӳпĕ шăтăкне кĕрсе выртнă пулĕ, „таса аттесем“ Копсойусра ĕçлеççĕ тенине илтсен вĕсен тусĕсем. Хытă шăмшаккисене хытах хускатнă пулĕ вĕсем.

— Ох, ох ђунăм ђăтаймасĭ, Копсойусра пупсем ĕçленипе килĕшейместĕп! Вĕсем пирĕн тăшмансем. Тăвасшăн сийен. Тавай пуп пулнисен вырăнне çĕнĕрен, çĕнĕ ӳт-пӳллĕ çĕвĕ етем!—тесе çийĕмри кĕпене çурас пекех кăшкăрас килет.

Халĕ пупсен йантăранах йанкăсланса пурăнас йăла улшăннă май, вĕсем урăх профессии çине куçнă иккен. Анђах йăва вĕсен халĕ те ăшă. Вăрнар Копсойусĕнђе ĕçлекен пупсен антрамасĭ темелле ĕнтĕ. **Вăтăр прођђăна йахăн вĕсем пеккисем Копсойусăн пухалтеринђе.** Тен есĕр кăна илтсен шаптах тĕлĕнсе кайăр.

Никишшов пухалтĕр хăйĕн пупра пурăннă тĕслĕхсене аванах пурнăçлаĭ кунта. Никишшовăн кăмăлĕ те пуп çаннинђен пĕђĕккех мар. Ĕçлекенсемпе каласма та ӳркенет вăл. Кăмăла каймасĭ вĕсене ĕçхалăхĕн ыйтăвĕ.

Вĕсене кура мар еппин. Çавах та Никишшов пысăк авториттетлă çын вырăнĕнђе шутланса тăраĭ кунта.

Акă копсойус пыл хатĕрлесе Мускава йараĭ. Анђах рашђут тăваймаççĕ вĕсем Мускавпа. Мĕн тумалла, рашђут тумалах вĕт?

— Тавай йарас Мускава пыл рашђутĕ тума!—тенĕ вара ирĕксĕрех копсойусрисем.

Какшĕ, Мускава каймасăр ĕç тухатни ара? Таварне малтан йараççĕ те, кайран хыççăн кайаççĕ.

— Йарас пулаĭ Мускава!

— Кама йарас?

— Никишшова!

— Конешнă ăна!—сӳтсе-йавнă копсойусрисем.

Никишшов копсойусри ĕçлекенсене; „ты мало понимаешь, сильнее меня работников нет“—теме пултараĭ пулсан, Мускава та Никишшовах йамалла килнĕ. Авториттет пĕђĕк мар курăнаĭ кунта Никишшовăн. Аван. Етемми авториттет пысăк пулсан, уншăн пур çĕре те çул уçă.

— Шупашкарта пухалтĕрсен канашлăвĕ пулаĭ. Унта каймаллах,—тухса вĕçре татах Никишшов.

Каллех аван кăмантировкă.

Копсойусăн пуп пулнăскерсĕр пуçне пĕр-пĕр колхоçнĕк çук пулĕ çав кун пек вĕренӳлле канашлăва кайма.

Кăмантировкăна кайма илнĕ 150 тенкĕ укçана Никишшов токкумĕнтсемпе çурри не кăна витнĕ пулсан та, правлени ăна нипођђом пĕтĕмĕшпех çирĕплетĕ.

Кунти Никишшовсем „маттур“ паркинех пухалтери тăхăр уйăх кайра тапаланса пыраĭ. Укçа-тенкĕ те наþар монисатсиленет.

Çапла çав, камран мĕн ђухлĕ шыраса илнĕ, йе шыраса илмеллине те Никишшовсен пухалтеринђе пĕлме хĕн. Тен Никишшов „таса аттесене“ шанаĭ пулĕ те, анђах пухалтери ĕçне вĕсем вĕренеймен-ха.

Çавăнпа мар çав Никишшовсем парăмĕсене парса татнă хресђенсем патне, сирĕн парăм тӳлеме тесе, повесткăсем йарса 20—30 çухрăмран копсойуса ђенеççĕ.

— Мĕншĕн вырăнсăр ђуптараттăр? тесе ыйтсан:

—Долго ли вам приехать, да обратно ехать, за то точную справку наведем,—теççĕ вĕсем.

Çапла çав вăл. Авђах Мускав кăмантировки мар ĕнтĕ. Хресђен ĕçсĕр мар. Кашни кунах уншăн хаклă Никишшовсем кайа йулса пухалтерийе авраштарнăшăн хресђен ăйăплă мар

Çапли çапла таха, анђах „таса аттесене“ тасатмалах тивет. Тен унсăрăн копсойусăн пухалтерийĕ тăхăр уйăх мар, тăхăрвуна уйăх та пурнăçран йулĕ. Кăмантировкăсем те йышланма пултарĕç.

Ĕç хавасланмалах мар конешнă. „Таса аттесем“ лăпкăнах пурнађĕç пулĕ те, аван „Хурçă“ йăлкор çырса пĕлтерђĕ. Малашне тасалĕç тетпĕр. **Н. Майак.**

---

Ăçта епĕ, ăçта?!—тĕлĕрсе ларнă Раман.—Çаксем-и сарă сăран атă, алса тулĕсем, тесе тĕлĕнсе пăхса ларнă Раман çтена çумĕнђе сарă сарахванлă таракансем перкĕшмелле выђанине курсан.

— Мĕскер атăшатăнха?—ыйтрĕ мелке çӳçлĕ арăмĕ.

Раман хăйĕн тĕлĕкне арăмне веçех каласа парсан, арăмин поттинккăшăн тимсĕлсе тăракан ури тупанĕсем хаваслăн кăтăкланса, хурлăхлăн хытса ларђĕç.

— Вăрмана кайма алса тулĕ пулђĕ тесе хĕпĕртенĕђĕ те!—терĕ Раман.

— Çаплађĕ те!—çирĕплетрĕ унăн ĕмĕтлĕ сăмахне арăмĕ.

...Тул çутăла пуçланă. Йунтапа йенђен шурăм пуç çути хĕрлĕ шупканăн йарăмланса килни палăраĭ.

Урампа иртекен çунасем сивĕпе нăтăртатса пыни, пӳртех кĕвĕленсе илтĕнет. Раман кусуйран тăрса пăхрĕ. Урампа йăраланса хуланалла шăвăнакан тийевлĕ лавсем ăна темшĕн куђантарђĕ.

— Ав тир лавĕсем!—тĕллесе кăтартрĕ арăмне.

— Хулана кайаç пуђ...

— Хулана... Епĕ кĕçĕр кайса килнĕ савăта леçеç.

— Апла пире те путтинкăсем илсе килсе парĕçха, тет арăм.

— Пире тыттармĕç çав... Епир атă, путтинкă, алса тулĕсене ав, ĕнерех ĕнтсе çунтарса сывлăша вĕçтерсе йатăмăр. Пире тĕлĕкре тумланни те çитĕ, тесе салхуллăн йĕрес пек каласа хуђĕ Раман.

— Тирне сĕвес тесе каларăм та çав сана!—тесе хуђĕ арăмĕ те. **Митта Петĕрĕ.**

---

## Сăлтав.

— Мĕншĕн есĕ вутă татма каймастăн?

— Çĕрĕпех тĕлĕкре вутă татса иртертĕм. Тавлăкĕпех ним канмасăр ĕçлеме пултараймăп ĕнтĕ.

## Пĕре те пăхман.

— Фетăрăв, сана арăму ђĕнет?

— Ăçта вăл?

— Айалти пӳлĕмре, ăмăрту мĕнле пыни çинђен çырса пымалли хăма патĕнђе тăраĭ.

— Лайăхрах каласа пама ӳркенетĕни мĕн,—ăçтан пĕлме пултарăп епĕ вăл хăма ăçта çакăнса тăнине.

# Каласу

Клупра вуламалли пӳлӗмре, иккӗш те аллисене хыҫалалла тытса каласса ларнӑ вӗсем.

— Прак ҫинҫен нумай сырма пуҫларӗҫ. Пахалӑх ҫук теҫҫӗ,—тет пӗрремӗшӗ хӑйпе пӗрле ларакансене.—Ҫӑнахах та ёнтӗ йапӑх тӑваҫҫӗ ёнтӗ хӑшпӗр таварсене.

— Нта! Прак нумай кӑларса пыраҫҫӗ ҫав хӑшпӗр претприйаттисенҫе ӗҫлекенсем. Сийен кӳреҫҫӗ...

— Тӗрӗс! Илетӗн макаҫӑнта пӗрпӗр йапалана та, таварӗ ним тӑшне те тӑмасӑ. Акӑ, сӑмахран, иртнӗ ернере епӗ поттинкӑ илтӗм. Пӑххалӗ, потошви хӑпӑнса ӳкме пуҫланӑ, йусама памалла пулнӑ та. Поттинкӑ пулҫи вара вӑл?

— Поттинкӑсем ниҫево халӗ,—тенӗ иккӗмӗш.— Аттӑ-пушмак таврашсем пахалӑх йенҫен ытти таварсенҫен малти вырӑнта тӑраҫҫӗ, тесен те йурамаллаха. Тумтир таврашӗсене илсе пӑхсассӑн... Каламалла та мар—пит йапӑх тӑваҫҫӗ. Ҫав тери йапӑх... Акӑ пӑххалӗ манӑн прӳккине: ҫӗвви ҫӗтӗлсе пырать, тӳммисем тӑхӑннӑ кунах татӑлса ӳкрӗҫ, ҫӗлессине те мишук пек, пӗртте килӗшӳллӗ мар ҫӗленӗ.

— Тумтир ҫинҫен каланипе килӗшместӗп,—тенӗ пӗрремӗш.—Прӳккисемпе пиншаксене ҫирӗп ӗҫлеҫҫӗха, поттинкӑсене вара... Нумайрах нормӑ тултарса, ытларах укҫа илес тесе, потошвисем хӑйпӑнсах ӳкмелле тӑваҫҫӗ.

— Потошвӑра марха унта ӗҫ, прӳккисене илсессӗн вара... тӳммисем хайсемех хӑйпӑнса ӳкеҫҫӗ. Нумайрах укҫашӑн...

— Ну, апла мар!

— Акӑ сана апла мар!

— Тумтир пирки суйса калатӑн есӗ!

— Ху есӗ суйатӑн, атӑ-пушмак...

— Суйатӑн!

— Суйатӑн!

— Тӑхтаха: ӑҫта ӗҫлетӗнха есӗ?—тесе ыйтнӑ пӗрремӗшӗ.

— Епӗ-и?—тенӗ иккӗмӗш.—Атӑ-пушмак тӑвакан „Кошупрӗшри“ ертелре. Есӗ ху?

— Епӗ—ҫӗвӗҫсен „Трушӗнӗтсӑ“ ертелӗнҫе.

Пӗрӗмӗшӗ хӑйӗн поттинки ҫине пӑхса илнӗ, иккӗмӗшӗ—прӳкки ҫине, иккӗшӗн те вара пӗрне пӗри калама сӑмах тупӑнайман урӑх.

**М—и.**

# Сыснасем ҫине йапӑх пӑхакан колхосра.

Ҫылай колхоссем выҫӑх апаҫе фронҫӗсем тӑвассине халӗ те йӗркелемен.

Теккапӗрӗн 1-мӗшне строиттӗлствӑ планне сысна таварлӑ фермисенҫе—49,9 проҫҫӑн ҫеҫ тултарнӑ. (Ҫӑваш Опкомӗн 5-мӗш пленӑмӗ постановленинҫен).




**Сысна:** — Апат пар, апат пар тетӗп. Апат вырӑнне, авӑ мӗнпе мана тӑрантаратӑр!..

# Елӗк районӗнӡи Тури-Панкли колхосне



„Капкăн“ фотокореспотенӡӗ Утмăл Турат текапӗрӗн 25 -мӗшӗнӡе ӳкернӗ.



**Намăс кӳрекен памăтнӗксем (сулахайра йур айне пулнă авăн ҫапмалли машшинӗсем, сылтăмра—ҫапман авăнӗсем). Колхос претҫетаттӗлӗ И. Куҫмин ӳкерӡӗке кӗреймен, мӗншӗн тесен вăл ӳкернӗ вăхăтра хăйӗн кăмаки айне урине салтсах пытанса ҫывăрнă пулнă.**

---

# УСЛОВИ пулăшрӗ

Мӗнле епӗр ӗлӗк аса илеймениш ăна? Шухăшласан тарăхса каймалла.

Пур пирӗн трактăр. Хӗлле те унпа тӗрлӗрен ӗҫсем ӗҫлетпӗр. Аван машшин. Пурне те тăват̆. Пирӗн колхосри трактăриссем унпа ҫав тери хытă ӗҫлерӗҫ, илсе килсен (хӗле тухсан илсе килтӗмӗр ăна) пӗрик ернерен пăсса пăрахрӗҫ. Ни тпру, ни ну. Мотторӗ тулхăрат̆, хашкат̆, ӳсӗрет, машшини вырăнтан та тапранмаст̆.

Питте „маттур“ пăсса пăрахнă хăйаматсем ҫăна. Кулак укҫипе те ун пек пăсма пултарайрас ҫук, вӗсем песплатнă ҫавăн пек пăсма пултарнă.

Ҫапах та колхос кулшăн вӗсене спаҫҫипă каламарӗ. Кам айăплине ыйтса тӗпӡеме тытăнӡӗҫ. Йакур Анттун ҫине перет. Анттун Ҫемен ҫине сулат̆, Семенӗ Петӗр ҫине. Пурте трактăрпа ҫӳренӗ. Кашниех май пур таран „тăрăшса“ пăснă. А кам нумайрах тăрăшнине пӗлме май ҫук.

Маҫтăра ӡӗнсе килӡӗҫ. Йусаттарса хуӡӗҫ хайхи трактăра.

— Шуйттансем!—тет претҫетаттӗл. —Тата тепӗр хут пăсса пăрахсассăн вара—сута паратăп пăсаканне! Сăтăр туни пулат̆ машшина йапăх тытса усрани...

Ҫав тери хытарса каланă пулсассăн та, пирӗн трактăриссем каллех тепӗр ернерен тăнсăр-пуҫсăрла ӗҫлеме пуҫларӗҫ—трактăр каллех ӗҫлейми пулӡӗ.

Каллех айăплисене тупма хӗн.

Анттун кăшкăрат̆:

— Епӗ мар ăна! Епӗ пӗтӗм 40 кратăс... т̆фу, мӗн кирлӗмара каласа йатăм, сатаннйе ҫӗр проӡӡăнӗпех тултарма тăрăшмарăм пулсассăн, ҫакăнтах мана ревиҫи комиҫҫи ҫăтса йатăр!—тет.

Йекур калат̆:

— Епӗ пăсман. Ӡăхсем пирӗн трактăр патӗнӡе ҫапкаланса ҫӳреӡӗҫ, пӗрпӗр ӡăххи ӗнтӗ, тăнпуҫ ҫук пирки, машшин мехханисăмне пăсса хунă пулмалла...

Ҫемен те кăкрине ҫапсах кăшкăрат̆:

— Епӗ.—тет.—ӳссе тӗреклесе ҫиткӗ ҫын, 37 ҫул пурăнатăп тӗнӡере (выхотной кунсемпе прокулсене шутламасассăн) суйма пултараймастăп. Епӗ пăсман!

Кам пăснине пӗлеймерӗмӗр ҫапах нийепле те. Пуҫа темӗскерле кирлӗ мар шухăшсем кӗре-кӗре кайаҫҫӗ: каллех йусасассăн та усси пулас ҫук, каллех пăсса пăрахӗҫ ăна, айăплине тупаймăн.

Претҫетаттӗл пирӗн ех! вăрҫат трактăриссене, ех! пăскăртат̆ сурӡăкӗсене сирпӗтсех.

Аптрал. Сасартăк комсомолӗс Ваҫҫук алла хаҫат тытса пырса тăрат̆ тавлашакансем патне.

— Мӗн есӗр хăтланаттăр капла! Ватăлнă ӗнтӗ хăвăр, сухалăрсем кӗреҫе пек ӳссе ларнă, хуҫалăха тытас тӗлӗшпе тăнпуҫ ҫитерейместӗр. Мӗншӗн хаҫатсем вуламастăр?

— Мӗн вара?—ыйтатпăр епӗр.

—„Мӗн—мӗн!“ хаҫатсенӡе такҫанах ҫыраҫҫӗ машшишăн ответ тытма пӗрпӗр ҫынна уйăрса хумалла. Ответсăрлăх—пирӗн тăшман. Сталин улттă условинӡе те ответсăрлăха пӗтересси ҫинӡен каланă.

Вăл ҫакна каланă хыҫҫăн, епӗр пурте хамăрăн ҫамкасенӡен алăпа шарт ҫапса илтӗмӗр. Пурте кӗрлесе карӗҫ. Хӗрарăмсем пӳртсенӡен сике-сике тухса, мӗн пулнă тесе хăраса ыйтма пуҫларӗҫ.

— Тӗрӗс!—тесе кăшкăрса йаӡӗ претҫетаттӗл. —Мӗнлеха епӗ халиӡен ҫавăн ҫинӡен шухăшласа пăхма пӗлеймен. Трактăршăн ответ тытма пӗрпӗр трактăриса ăрасна уйăрса хурсан, вăл машшина хăйӗн куҫкӗски пекех сыхласа усрӗ.

Мӗнле шухăшлатăр есӗр? Икӗ трактăриса машшиншăн ответ тытма уйăрса хугăмăр та, вӗсем ăна пӗӡӗк аӡана пăхнă пекех пăхса усрама тытăнӡӗҫ, кашни кайкхине ҫу сӗреҫҫӗ, кашни винтта тасатаҫҫӗ. Халӗ трактăр ӡипӡиперех ӗҫлет, пӗре те пăсăлман.

Авă мӗнле усăллă вăл—хаҫат вулани, тата партти кăтартувӗсене пурнăҫа кӗртсе пыни.

**Шалӗв.**

# Кăнђђелерте

**● татăксем**

Канверт ăшĕнђен
Еп сикрĕм странитсăна.
Строкка тăрăх утап
Ес калăн—
екскурççире.
— Апла та мар,
капла та мар —
 Екскурççишĕн паманђђĕ
çулуççĕш.

Темех вĕт тумĕсха
Тен—правасăр,
Утсассăн анлă Атăл тăрăх.
Пырап.
Сисмен те,
манпа пĕрлех
Утаť мĕн хусах мыскараçă.

* * *

Лупкамĕш йăлăм
Анлă Атăл
Куç хĕсрĕ пинлĕ хумĕпе.
Куратни?—теп,—
Ђăл-ђăл хумсемшĕн
Йлемлĕ сивĕ кĕркунне.
Йулташăм ман кулаť,
Мыскараçла
илет сарă çĕлĕкне- -
Хумсем,
хумсем,
илтетри есĕр,
историн хулăм сассине?..
Хумсем пире пуç тайрĕç шăппăн.
Пуç тайрăмăр пурте,
Аслă тăвăла.
Аслă тăвăл тавнах пуçланнă,
Тăвăл пыраť,
Тăвăл!
кăклаť вăл—
ђуралăх тымарне.
. . . . . . . . . . . .

---

Епĕр паллашнă Атăл хумĕ
Тавнах вăраннă.
Атăл, Атăл!..
хумсем хывса
ывăтатťçке çўп-çапа!
Мыскараç ман
Çакна курса,
Çухраť:
сирĕл тунката!
. . . . . . .

* * *

Утатпăр çўлĕ пашнĕ çумĕн,
Пашнех те мар—ђиркў, тен çеç
вăл.
Ђиркў-и?
Пашне-и?..
пур—пĕрех.
Ђĕрĕ йунпа вăл сăхлă тепĕр
Шур ђиркўрен пĕр утăмрах,
Ђăваш ђĕлхин тимĕр лаçĕ
Лараť ўссе
Çўлĕ пашнĕн
тăрри шур ђул ун,
Ђул тутипе пире калаť:
Мыскараçсем!
Пуçа пĕтертĕр,
Йĕплерĕр мĕскĕн пупăма!
Куçа уçап.
Пăртак тăрсан:
Сахал-им сăхă йун кўллийĕ,
Йĕплерĕм тимĕр тăрруна?..

Пашне ђĕнмест,
Истори ђарĕнђ ун,
Ђуралăх сăнђăр ваннипе.
Хĕпĕртерĕм—
Пĕтех ес,
Çухăратăп ахăрса.

* * *

Пашне куçран тавнах çухалђĕ.
Уçатăп ретаксин алăкне.
Кĕреп:
— Сывах-и, Иван Иванђђă!?
Сĕнетĕп хамăн аллăма.

— Килех, тет, куçне хĕссе пăхаť.
Хăй умĕнђе,
сахал пуђ,
Пĕр çитмĕл çиђђĕ
Выртаť мĕн „Капкăн“ пĕкеђи.

Пĕрне илеп,
тĕсĕ ун ылттăн.
Пушахши?—теп.

Ах,-ха ха, ха—ахăрайса,
Кулаť хай манăн мыскараçă.
Пăхатăп.
Тĕлĕнмелле!
Пĕкеђере сахал пуђ
ђынлă пупĕ.

Килсе çакланнă йалсенђен,
Пĕр иксĕр çиђђĕ
лотăр—таркăн
Йăшăлтатаç;
Куратăп, пурнăç хурђĕ
Тапаланаť утса.

Кунта мĕн пуп хăратнă—тамăк!
Тамăк кулакшăн,
пупшăн.
Нăй, най, нăй, най...
А—у,
ленктерĕп!..
Кĕрлерĕаслă пулĕмре.
— Акку мĕскер,
мĕнле карттинă,—
Ыйтатăп савнă Муђинђен.

— Хе-хе!,—кулаť.—
Куратни, акă
Пĕр портфĕл ђĕрĕ йапала.
Тĕлĕнмелле!
Йăшăлтатаç.

Кусем анђах çеç ленкнĕ.
Муђи калаť:—
Аккусене каçпа йĕплемелле!
Йĕплех, муђи, вăйу çитет сан.
Еп те хуť йĕплеп иккĕшне.
Çапла майпа,
алла сулса
тухап урамалла.

Аху!
шурă пашне,
пашне çухалнă—
Шур тăррипе çурмаť пуçа.
Ун вырăнђе,
Лараť пĕр савăт—
сасси паха ун—витмелле!
Хула çине пăхап;
Пĕлĕт çўллĕш
Пўртсем лараççĕ каранса.
Аташатăп—
ăçта еп?..

Шупашкарах пысăк хула
хађ пулђ-ши?—теп.
— Хе-хе, кулаť пĕр çын.
Йураť, итле ес—
истори турĕ ку сăна.

Аса илеп;
Муђи хĕсеђђĕ пурнăç хурђĕсене.
Вĕсем пĕтсен çеç—
Вăй илнĕ çĕнĕ çуркунне.

* * *

Утасха Çĕнĕ Шупашкарта,
Сĕнетĕп хама-хам.
Утас!
Пырап урамсемпе,
хĕри таврах мрамăр.

Х-у ук!- çухăраť малта.
Пăрăнаймарăм,
çийах килет.
Ай, ай!—вăрантăм.
Пулнă тĕлĕкре!..

— Ехе, тытас пĕр çĕр йе аллă
Вĕр çĕнĕ пурнăç хурђсене.
Вĕсем ђараç ђылай мĕн!?.
Пĕр çĕнĕ шухăш,
пуçа капланђĕ—çыр, тесе.

**И. Кашлинке.**

## Пăрçа кукăлĕ пĕçерекенсем

**„Канаш“ хаçатри „Паймениатă“ статйа çумне хушса çырни.**

Ăвăс ђукмар муклашки
Тата суха купташки,
Вĕсем иккĕш пĕр тăван,
Тытрĕç канаш пит аван:
„Кайас пулаť хулана
Пурнăç мелĕ шырама;
Тытăнăпăр çырмашкăн—
Уђепнĕксем тумашкăн;
Сăвăсем те çырăпăр,
Укçа-тенкĕ „çапăпăр“;
Алђманахсем тăвăпăр,
Хамăр сĕнсе çапăпăр;
Нушасенђен тухăпăр,
Ђаплă йатсем тупăпăр:
Майакковски пулăпăр,
Корккирен те йулмăпăр.
Шупуççынпе, Келине,
Ваçанккине, Арисне,
Шăпђăкĕпе, Елкерне,
Унтан Йăван Муђине,
Ваççили Иванăђа,
Тата леш Толковиђа
Тивĕçлине парăпăр,—
Хÿре вĕçне хварăпăр
Тишкересрен хăрас çук,—
Пире çитес çынсем çук!
Канашларĕç турĕç те,
Хуланалла вĕçрĕç те.
Çитрĕç пысăк хулана,
Кĕрсе ÿкрĕç вырăна.
Тытăнаççĕ çырмашкăн,
„Протуксисем“ тумашкăн.
Йуxať ђернил витрипе
Хуралаť хут тоннипе.
„Хаклă тавар“ тăваççĕ:
Уђепнĕксем, спорнĕксем,
Алђманахсем, сăвăсем
Пĕр самантра пулаççĕ.
Вĕсем валђђи маттералсем
Кив кĕнекерен пухаççĕ,
Кирлĕ-кирлĕ сăвăсем
Ретаксирен тупаççĕ.
. . . . . . . . . . .
Çăмарта пиççе çитрĕ те,
Çăвара хыпма пулмарĕ;
„Протукси“ те хатĕр те,
Анђах çутă курмарĕ:
Тишкерекен çыннисем
Партти шанса лартнисем,
„Таварсене“ пăхрĕç те,
Маккулаттур турĕç те.

**Сенĕк.**

## „Штурм“

Аслă Патăрйеленђи райпотрепсойус укçа-тенкĕ мопилисатсилессипе прорывра. Нойапĕрте ăна пĕтерме штурăм турĕç, анђах райпотрепсойус претçетаттĕлĕ Типайккин, косторкра ĕçлекен Фетоçкинпа пĕрлешсе ерех ĕçсе, çынсене хĕнесе çÿрет.

Вăл, пысăк мар урам,—
Тĕп çпирт урамĕ.
Асту, унтан çуран
Иртме йурамĕ.

Тен сан тĕлнех килсен
Типайккĕнсен хăрахĕ,
Майран йарса илсе,
Пăрсах пăрахĕ.

Пăхма хăруш унта,
Пусран та çăвартан,
Кÿпкеççĕ иккĕн тан—
Унтан... Кунтан...

Вот, еттă та-а-а...
„Прорывсене çапаççĕ“
Ерехе сыпнă та
Хайаррăн штурмлаççĕ..

**Йакку Араслан.**

---

# „АКТИВИССЕМ“

Пайан виçĕ ерне шăпах тулђĕ ĕнтĕ копператтив лавкинђе куçа çисе тăракан тулли путтылкăсем веçех пушанса ларакан стойкасен айне канма кĕрсе выртни.

Апхÿрт йалĕнђи (А. Патĕрйел р.) „активиссем“ виçĕ ерне ĕнтĕ питĕ çĕлкĕш пуçĕсене ђиксе вĕремĕн вĕри сывлăшпах сывласа, тути çăварĕсем хăпаланса тухса пĕтрĕç.

— Ех, пĕрехххутђен, хăçан çак шуйтан çумăрĕ çума ђаранĕ, çумăр ђарăнса çанталăк йĕркеленсен кайађĕ теха пирĕн пурнăç!

Вулакан йулташ, тен есĕ, Апхÿрт йалĕнђи „активиссем“ йĕпе анкартинђе çĕрсе выртакан тыррисене туртармашкăн ђĕрисемпе çунса, çанталăк тÿрленессине кĕтсе хуйхăраççĕ тейĕн. Тĕрĕссипе каласан апла мар çав, ун пек пулсан, çав „активиссем“ тенĕ сăмах умĕнђе, унăн хыççăн та саппеттой текен йапаласем те пулмĕђђĕçĕ.

Çанталăк тăп-тăр уйар та шартлама сивĕ. 5 кун шăпах ĕнтĕ шăпăртатса йухакан йăлăхтарнă çумăр сассийĕ хăлха айĕнђен кайни. Шак Ваçукĕ пайан, тăм илсе пĕтнĕ пит куçпа питĕ хăвăрттăн, йалканаш кăнђелерне пырса кĕрсе, пуçĕсене ђиксе ларакан „активиссене“, пайан Ђĕмпĕр хулинђен 2 лав 40 кратăслине тийесе килни çинђен раппăртларĕ.

— Суймасна, Ваççук?-харăссăнах йарса илђĕçĕ хай „активиссем“ Ваççука.

— Тупăта туршăн суймастăп, курмастăрим, пит куççене веçех тăм илсе пĕтернĕ, тем тĕрлĕ йăвăр пулсан та, хамăр çынсемшĕн тăрăшас пулаť вĕт...

— Ну йурĕ, молотси, Ваççук, анђах есĕ сиссе ĕлкĕриђђен пĕрер савăтне çаклатса каç валђђи хатĕрлесе хур, асту, осторошнă хăтлан, атту леш шуйтанĕ (Р Ĕ К уполномођђăннăйĕ) сиссен лайăх мар. Сăмах татрĕçĕ, каçхи совешђани валђђи çуртне те палăртса хуђĕçĕ.

Сĕм тĕттĕм, куçран тĕртсе курăнмасť тискер кĕрхи çĕр. „Активиссем“ пăçăрах пĕр çĕре пуçтарăнса „хĕрÿллĕн“ канашлу тапратнă. Литтăр хыççăн литтăр, тулли кĕленђесем канашлу преçитиумĕнђе ларса ывăннă хыççăн, сунтăх кукрине канма кайса выртаççĕ.

Канашлу хĕрÿллĕ иртет. Претставиттĕлсем пур орканисатсисенђен те пухăннă, колхос правленийĕ пĕтĕм составĕпех, йалканашĕнђен те пур, копператтив правленийĕнђен те т. ыт. те.

Ех мĕн пурăнас мар çаккăн пек пурнăçпа!

— Унас прорывов нету, а если пур тăк пускай районнăй уполномођђăннăй ликвитирует.

— Правĕлнă, са то он çута выслан, йа преткол-хос, ваши нађђалнĕк, пре то мной толшĕн пођинитсă сам РИК...—Тайош ђелăй ђетвĕрт, с литровками санииматса мы не плохие љути...

Çав каç Апхÿрт колхосри пĕрлештернĕ сыснасем те, çапман капансем те канашлу туса иртернĕ, вĕсен ресолђутсийĕ „активиссенђен“ витĕмлĕрех пулнă.

„Колхос правлени, йалканашĕ, ытти орканисатсисем те пирĕн çинђен манђĕç, вĕсене ĕçкĕ пулсан урăх нимĕн те кирлĕ мар, акă епĕр пĕрлештернĕ сыснасем, хĕл сиввине ђатаймасăр, кулленех хамăр ĕретрен „Мокилевск кĕпернине“ йулташсене ăсататпăр. Пурĕ анкартинђи ишĕлсе выртакан капансене кулленех тĕрлĕ выђăхсем салатса ишеççĕ, ђасрах мерă прињаť тăвăр“, тесе пĕр сасăпа ресолђутси йышăнса района наробнăй çутăлнă çутăлманах йађĕç.

**Ф. Рум.**

# КЕНИ йе КЕМИ

— „Кени“ тени вырӑссен йӑллипе те, ђӑвашсеннипе те—калама ҫук ӑслӑ, ҫынсенђен пысӑкрах шухӑшсене шутлама пултаракан пуҫлӑ ҫынна калаҫҫӗ пулӗ,—Хуҭ вӑл такам пултӑр: тухтӑри, иншенери, уђђитли, сӑвӑҫи йе фељйеттонҫӑ. Ҫӳлте асӑннисенђен пӗри те пулин пултараҭ пулсан, ӑна „кени“ тени пӳрт пӗрени вырнаҫнӑ пекех вырнаҫуллӑ.

— Кеми, кеми!—тетђӗ манӑн асатте. хӑйӗн хуҫӑк мыйракаллӑ кађакине. Кеми йатлӑ кађакийӗ, ҫынсенђен ӑслӑрах пулӗ, тен ҫавӑнпа „кени“ тесе ђӗнет ӗнтӗ, теттӗм. „Н“ пуквӑ калайманнипе „м“ каласа „кени“ вырӑнне „кеми“ калаҭ-ши тетӗп.

Пӗринђе май килђӗ:—Микул муђи,—тетӗп,—мӗне пӗлтерет вӑл „кеми“ сӑмах?..

— Ех-хе-хей!..—кулаҭ манран муђи.—Ман кађака вӑл ҫурма ӑслӑ, ҫавӑнпа „кеми“ тетӗп. Хӑй сухалне ҫинҫе пӳрнисемпе, йумахри ђул турӑсем йевӗр сӑтӑрса.—Словарте шыраса пӑхсамђӗ!..

Ђӑнах та Микул муђи сӗнӗвӗ, питӗ вырӑна килђӗ. Притвӑ сӑмсипе кӑшт йакатнӑ анашӑмиллӗ пуҫӑма ӑс кӗнӗн туйӗнђӗ.

Хама ӑслӑ пек туйрӑм.

Ҫак ӑсемпах (темле ахаљ ҫӗр ҫӑтман мана) 2-мӗш Хурашаш йалне ҫитме тӳрӗ килђӗ, Ну, уш йалне те пӗр йатпах каласан ӑнласа илеймӗр: унӑн йађӗ—Иарантайккенӑ, Лутра-Пакӑш, Новӑй, Сурнӑй та пур· (Кусем ӗнте Х-Ђутай районӗнђе пурте пур.)

Иал тенӗ ҫӗрте, йалта йатлӑ ҫын пулатех. Калӑпӑр хӑш йалсенђе пуп пулнӑскер, пайан кун сурӑх тирӗ пӗркеннӗ „утарнӗк“. Тата теприсем тейеђук, панамар—амин кассисем „Я. Ш. Ђ. таврашӗсем. 2-мӗш Хурашари йалта йатлӑ ҫынсенђен пӗрри ҫак йалти уђђитлӗ, йӗкӗт ЙЕФРЕМӐВ!

Ҫак епӗ асӑннӑ сӑмахсем: Кени те кеми те, ЙЕФРЕМӐВ ҫумне ҫат ҫыпҫӑнса ларнӑ. Тем уйӑрас пулсан хирурк ҫӗҫҫи витерӗ-и анђах!

— Кени тенӗрен ЙЕФРЕМӐВӐН „кенийӗ“ ҫакӑнтан паларӑҭ: пӗринђе Йарантай Карапӗ вилме ӗлкӗрнӗ. Вилнӗ, вилнӗскере йупа туса ӑсатмалла пулнӑ (асаттесен йӑллипе ӗнтӗ). Йупа тенӗ ҫӗрте ерех те пулаҭ, сӑра та.

— Йӑнкӑр,—тунӑ каллех—йӑнкӑр-р-р!.. ЙЕФРЕМӐВӐН пырӗ ҫапла каланӑ. Пырӗ ыйтнӑ тӑрӑхӑн ЙЕФРЕМӐВ ӗҫнӗ, ташланӑ, кӑмӑлӗ хӑпарнӑ, ӳсӗрӗлнӗ. (Ђеретри сатађђа тултарнӑ туйӑннӑ ӗнтӗ ӑна). Ӳсӗрскер урамалла кантӑр ӑшӗнђи ђуђђӑл пек тайкаланса тухнӑ, хӗрсем ларнӑ ҫӗрелле утнӑ (йӗкӗт ӗнтӗ вӑл снаш!).

Епӗ те каланӑ пек урам тӑрӑх пыратӑп.

— Ђиксе пӑрахатӑп Марккайа мӑнкунђен, кам ҫыхӑнаҭ, йал пуҫӗ!...

Ҫухӑраҭ ИЕФРЕМӐВ киншалне ҫавӑркаласа.

— Ну, —тетӗп,—ку вӗҫсе кайрӗ, пытанас!

Йероплан помпӑ пӑрахасран пытаннӑ пек пытанса пӑхатӑп.

Ђӑнах та ЙЕФРЕМӐВ, те вӗҫрӗ, те утрӗ—ҫук!

— Ай, тур-тур! ЙЕФРЕМӐВСӐР мӗнле пурӑнас.

— Аха, ленкрӗн, ђикеп! Ҫтервӑ!—киншалӗ йавӑнаҭ ИЕФРЕМӐВ аллинђе. Пӗрне ђикме тытӑнаҭ, унтан теприне. Киншалӗпе пырне сӗрсе кӑтартаҭ, тата...... Ехе хей!—ЙЕФРЕМӐВ сахал выђарӗ-им. Тен кино ваљђи ӳкернӗ пулсан: Амерӗк, Иевроппӑ.., Лонтӑн, Париш... курасшӑн мӗн ђухлӗ вӑрҫса пӗтнӗ пулӗђђӗҫ!

— Тӗрлӗ султансем, патшахсем, пӑлхарсем вӑрҫнӑ, ку ИЕФРЕМӐВ уш тӗнђе халиђђен Курман керой, тесе—акӑљђансем, нимӗҫсем киноран тавӑрӑннӑ пулӗђђӗҫ.

Пулати, пулмасти—пирӗн ӗҫех марха вӑл. Халӗ тата ЙЕФРЕМӐВА шкул таврашӗнђе курар.

Малокрамӑтнӑйсем (ИЕФРЕМӐВ пек хута сахал пӗлекенсем сахали) шкула пухӑнса ларнӑ. Кулаҫҫӗ, ахӑраҫҫӗ!

Ахӑрса ҫитрӗ ЙЕФРЕМӐВ та (сахал пулман ӗнтӗ кун пек 'истори!).

— Ну, тет,—вӗрене пуҫлар!—Мухмӑр пуҫӗпе авкаланаҭ хӑй. Ку ӗҫ те уҫах мар, урнӑ йыттӑнни пек куҫӗ.

Хӗрсем:

— Вӗрент!..

— Вӗрент!...

— Ҫиђђас вӗрентеп,—йӑтаҭ ЙЕФРЕМӐВ урай милӗкӗ.

— Акку пулаҭ: „А“—ҫатлатараҭ пӗрине пуҫран.

— Акку „Р“—ђышаҭ теприне тутаран.

Акку —„Н“—милӗкпе хуса тухса кайаҭ ыттисене.

— Ай-ай!...

— Аха, есӗ „А“ вӗренесшӗн мар, сана епӗ куљттурлӑ милӗкпе ҫапатӑп, вӗт!

Хӗрсене ҫапла вара „А“ паллаттарнӑ. Паллатарӗ вӑл теме те, кампписене вӑл киншал ҫавӑркаласа, хутшӑнаҭ. Ҫынсем утарнӗкре ӗҫленӗ пулсан, вӑл—киншалпа! Ним те пулмалла мар, вӑл „кемиллӗ“ „кени“ вӗт! Пултараҭ мур! А, епир ЙЕФРЕМӐВА „Капкӑна“ паллаштарсан вӑл мӗнле пек туйӗ-ши?

**Урамри.**

---

## Кӑмӑла кайман.

— Ҭфу! Пурнӑҫи ку вара? Арӑмӑн хут пӗлменлӗхне пӗлтертӗм те, вӑл савӑннипе ман ҫине сайавлени ҫырса панӑ. Шалу илнӗ кунсенђе ӗҫсе ҫӳресе хӗнесе пӗтерет, тенӗ.

## Тӗссӗр мар.

— Мӗн ҫинђен каласшӑн пулнӑ есӗ токлатра? Нимӗн те ӑнланаймарӑм. Токлату тӗссӗр тухрӗ.

— Тӗссӗр пулма пултараймасҭ! Епӗ ӑна хӗрлӗ ђернилпа ҫырнӑ.

## Патӗрйел районӗнђи Турхан йалӗнђе.

— Сирӗн йалта вуламалли ҫуртра кӗнекесем нумай-и вара?

— Нумайах мар та, пур.

— Унтя кӗнекесене вулама параҫҫи?

— Ҫук, памаҫҫӗ пулмалла. Шӑшисемех вулаҫҫӗ унта.

**Арҭҭушкай.**

## Хура ҫынсем.

Хура вӑрман хыҫне капкӑн хутӑм, хура ҫынсемшӗн марђђӗ, тилӗшӗн. Кӗнӗ ӳкнӗ хура ҫынсем, Ҫӗменӑв (Ҫӗрпӳ районӗ) йалсоветӗнђе ӗҫлекенсем.

Вӗсем „татӑклӑ 3-мӗш ҫулӑн“ сайомне сарас плана пӗр прођђӑн та тултарайман.

Тултарайман ҫав. Вӗсене хӑйсене мнхӗ ӑшне тултарса хура хӑма ҫине пуҫхирлӗ ҫакса хумалла ..

# Пӗђђенех йулнӑ

Ирхине епӗ савӑт кӑмиттеђӗнђе куртӑм ӑна. Вӑл сӗтел умӗнђе, тутӑр вӗҫне турткаласа, вӑтаннӑ ҫынла тӑрат. Савӑт кӑмиттеђӗн претҫетаттӗлӗ ӑна хӗрӳлленсех намӑслаҫтарат.

— Намӑс мари сана, Марйӗ Иванӑвна? Пире те намӑс тивет сан пирки. Шухӑшласа пӑхха хӑвӑн пуҫупа—пӗтӗм савӑђӗпе есӗ ҫеҫ пӗђђен йултӑн. Пирвайхи вырӑна йышӑннӑ пулӑттӑмӑр епӗр, „сан пиркийех хӳрере пыратпӑр. Пӗр ҫыншӑн, а! Йулташлӑ сут урлӑ айӑпламалла сана... куншӑн.

Сотсиалисӑм ӑмӑртӑвӗ тӗлӗшпе уксахласа пырат ӗнтӗ ку,—тесе шухӑшларӑм епӗ.

Кӑнтӑрла сойусра тӗл пултӑм ӑна. Каллех вӑл тутӑр вӗҫне турткаласа, вӑтанлӑ ҫынла тӑрат, секреттар йӗрес патне ҫитсех унпа калаҫат:

— Мӗнле капла ӗнтӗха, Марйӗ Иванӑвна? Аппаланатпӑр, аппаланатпӑр санпала, есӗ вырӑнтан та тапранасшӑн мар. Пӗтӗм сойуса намӑс кӳретӗн. Пирӗн профсойус малти вырӑна йышӑннӑ пулӗђђӗ, анђах есӗ ђӑрмантаратӑн. Вӗт пӗтӗм сойусӗпе есӗ ҫеҫ йулнӑ...

Ђлен укҫи тӳлемен ӗнтӗ ку, тесе шухӑшларӑм епӗ.

Каҫхине ШАКТ правленинђе куртӑм ӑна, ӗлӗкхи пекех тутӑр вӗҫне турта-турта вӑтанса тӑрат претҫетаттӗл умӗнђе:

— Йулташ, апла май килеймӗ! Ҫургра пурӑнакансем 100 ҫын ытла, 100 ҫынран есӗ ҫеҫ кайра пыратӑн. Пӗр выђӑх пӗтӗм кӗтӗве варалат. Пирӗн ҫуртрисем малти вырӑна йышӑнса тӑмалласкерсем сан пиркийех хӳрене тӑрса йулнӑ. Куншӑн сана хваттертен кӑларса йарсан та йурамалла.

Хваттер укҫи тӳлемесӗр тӑнӑ ӗнтӗ ку,—тесе шухӑшларӑм епӗ.

Киле таврӑнсан, ҫтена витӗр ҫав хӗрарӑмӑн тӑхӑр ҫулхи хӗрӗ амӑшне вӑрҫнӑ сӑмахсем илтӗнсе карӗҫ:

— Ан та ђӗннӗ пуртӑр хирӗҫ! Анне-и ес? Пирӗн класра 45ађа, нихӑшӗн амӑшӗ те сан пек мар. Хӗрелсе ларма ҫеҫ тивет сан пирки... Пӗтӗм шкулӗпех пӳрнепе ман ҫинелле кӑтартса кулаҫҫӗ. Уђиттӗл тӳрех каларӗ: намӑс мари сана аннӳ пирки?—терӗ. Есӗ анне мар, ђӑрмавлӑ йапала ҫеҫ.

Нимӗн те ӑнланаймарӑм кунта. Кухђӑна тухрӑм та, ыйтрӑм вара хӗйӗнђен:

— Марйӗ Иванӑвнӑ, мӗн пулнӑ вара санпала? Мӗнле айӑп тунӑ вара есӗ?—терӗм.

Вӑл вӑтанса каларӗ:

— Хут пӗлместӗпҫке епӗ, ҫавӑнпах намӑслантӑм раҫҫӗ. Нийепле те килҫуртӑма пӑрахса вӗренме кайса ларма вӑхӑт тупаймастӑп. Кайасах тесен вӑвӑлхӑђӗ тупӑнӗ те.. терӗ айалалла пӑхса.

Тепӗр ернерен ликпункта васкасах кайнине куртӑм

**М—и.**

## Ӗҫсӗр 80 ҫын тӑраҫҫӗ.

„Пођшевик" савӑтӗнђе мехханиђӗски тсех тунӑ полттӑсем нихӑш кайккӑна та йурайман. Ҫавӑн пирки 80 алӑ ӗҫлемесӗр тӑмалла пулнӑ.

(„Ӗҫри хӑвӑртлӑхсемшӗн" хаҫатран).



— Ҫак полттӑ ыйтӑвӗ урлӑ каҫса кайсассӑн 80 ҫын ӗҫ тупатпӑр та... Нихӑшӗ те полттисем кайккӑна йурайман ҫҫӗ. Кӑна тӑвакансен пуҫӗсенђи кайккисем тухса ӳкнӗ пулмалла

## Вӗҫен-кайӑк.



**Ӗҫкӗ ҫынни.** „Мана ма колхоса илместӗн?

**Претҫетаттӗл.**—Мӗншӗн тесен есӗ кайӑк пек: акмастӑн та, вырмастӑн та, пухмастӑн та...

# Çулăмсăр ПУШАР

Нимĕн йулмийех çунса карĕ. Çунса карĕ çав пирĕн кӳрĕшри Каӊук Хĕветри. Çунса кайаттӊен вăл питĕ кĕрнеклĕ пурнаттӊĕ. Пысăк, кил карти йĕри таврах çуртсем пулнă. Килтен ӊăх та вĕççе тухайман. Çапла вара питĕ йакши пурăнӊĕ. Анӊах вăл вăхăтра колхосра пулман. Халĕ те колхоса кĕмен.

Ĕлĕкрех, епĕ астăвасса Каӊук Хĕветри питех пуйан пулман. Çак вицĕ çул хушшинӊе питĕ шутсăр ӊĕререн «тăрăшса» ĕçленипеле пурнăçне йусарĕ. Пурнăçне йусарĕ çав йалти лапкара вицĕ çул прикашӊăкра ĕçленĕренпеле.

— Мĕнле çав Каӊук Хĕветри питĕ майланса тăӊĕ?

— Прикашӊĕкре ĕçлерĕ.

— Вăл уйăхне те 20 тенкĕ çеç илсе пурăнӊĕçĕкехе?!

— Вăт, йепле как калас, пурнăç вăл пĕр ĕрĕхсен питĕ хытă ӊупат.

Çапла калаççĕ вара йалти çынсем ӊас-ӊасах Хĕветĕре курсассăн, йе унăн умĕнӊен иртсе çӳренĕ ӊухне.

Çулла. Хĕвел хĕртсех пăхнă. Хĕветĕр икĕ ернелĕхех хулана ĕçлеме тухса кайнă. Халĕ лапкара ашшĕ вырăнне ывăлĕ сутă тукалат.

— Ну, мĕнле пурнатăн?

— Питĕ аван.

— Пайан вăрмана кайатпăри?

— Мĕн илмелле санăн?

— Çитсă пур темеççĕ-и?

— Пур.

— Миçе меттăр кирлĕ сана?

— 5 меттăр.

— Ӊаррр. Çамрăк прикашӊăк пĕр хĕре 5 метр çигсă çурса паӊĕ. Çитсă колхоçнĕксем валли пулнă.

— Миçе тенкĕ тӳлес?

— 7 тенкĕ çурă тӳлемелле, ан та тӳле, хам тӳлĕп.

Ӊылайӊен икĕ çамрăк ӊĕре лапкара калаçса тăӊĕçĕ. Вĕсен кăмăлĕ татах та калаçасшăн пулнă та, анӊах çынсем пынă майĕпеле хĕрĕ килелле уттарӊĕ.

Каçхине йалти çамрăксем йал çумĕнӊи вăрмана вăйа пухăнаççĕ. Вăйă кĕрлет. Йурлаççĕ, ташлаççĕ... Вăрман йанрат.

Çамрăк прикашӊăк хăй хĕрĕпе вăйăран уйăрăлса йунашар ларнă та, илемлĕ калав пуçланă. Хăйсем иккĕшĕ те конфеткка ĕмсе ларнă.

— Прикашӊĕк ăçтарах пурăнат?

— Во-он çавăнта, тесе колхос претçетаттĕлĕ хуларан килнĕ çынна кăтартса йаӊĕ.

— Ревиçи тума килнĕ пулĕ-ха.

— Çапла курнат... лапка умĕнӊи халăхсем калаçса илӊĕçĕ.

Тăвата кун йалпо лапкине ревиçи турĕçĕ. Лапкара 1763 тенкĕ растрат.

Тепĕр ернерен Каӊук Хĕветринне туркипе ӊылай çурӊĕсене сутрĕçĕ.

— Çулăмсăр çунса карăм, тесе Каӊук Хĕветри тĕрмере йурласа ларат.

---

Çавăн пек йапăх ĕçлесе пурăннипе, кирлĕ мар елементсем копператсине кĕрсе ӊылай сийен тăваççĕ. Кун пек хăтланакансем нумай. Канаш районĕнӊе кашни йалпора тенĕ пекех растраттă Мĕн пурĕ районĕпе 12 пин тенкĕ растраттă.

Вуникĕ пин Канаш райсойус укçи çулăмсăр çунса карĕ.

Кĕске вăхăтрах шыраса илмелле. **Ваçухха.**




Сдано в производство 14-XII 31
Подписано к печати 31-XII 31
Отв. редактор А. В. Васильев.
Секретарь журн. И. Иллари-ов
Выпускающ. редактор Н. Янгас

Ответлă ретактăр **А. В. Ваççилйĕв**

Ст. ф. Б. 200×285. Об'ем 1 п. л. 112,000 п. з. в п. л. Изд. газ. „Канаш"

Уполн. Чувашлита № 759. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 3 Тираж 8400 экз

# СУНТАЛ

**Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен Ассотсиатсийĕ кăларса тăракан илемлĕ литтераттур, политтĕк, криттĕк, искусствă тата наукка ШУРНАЛĔ**

**Ретакси коллекийĕ:** А. Солăттăв, А. Ваççилйĕв, В. Краснов-Асли, Н. Ваçанкка, Н. Танилăв, Ç. Елкер

Шурнал уйăхра пĕре—çулталăкра 12 №-тухат̆ „Сунтал" тухма пуçлани IX-мĕш çула кĕђĕ.

## 1932-мĕш çулшăн çырăнса илĕр!

**„Сунтала" ђăвашсен мĕнпур палăрнă литтераттурăллă вăйсем, криттĕксемпе пуплитсиссем, искусствă тĕлĕшпе йертсе пыракансем çырса тăраççĕ.**

Пуплитсиссемпе криттĕксем: Ç.П. Петров, В. И. Токçин, А.И.Солăттăв, И. Т. Куçнетсов, Л. Спассăв, К. Титтов, Н. Солăттăв, Т. Танилăв, К. Алентей, П. Иванов—Вĕркĕђ, Н. Ф. Танилăв, И. Павлăв—Пинер, А. Ваççилйĕв, В. Кутрйавтсĕв, В. Маркковниккăв, В. Толковăв, Йем. Саххарăв, Љава Платтунĕ, М. С. Кут̆т̆йашов, Й. Романăвă Çеркейĕв, Е. Ђернов, И. Йаккăвлĕв, Ф. Алексантăрăв, Ф. Метсенаттăв,

| Иссайĕв Мĕтри, К. Куçнетсов—Кели, |
|---|

Н. Романăв, Шолки Петри, К. Ломоноссăв, И. Молостовккин т. ыт. те

Роман, повĕç, калав, ођђĕрк çыракансем: В.И. Краснов—Асли, М. Танилăв—Ђалтун, Пайраш, Мĕтри Ваçлейĕ, А. Талвир, М. Трупина, Л. Акаккăв, Н. Патман, Й. Еллийĕв, Н. Йевкрафăвă, К. Олитта, А. Таӈкков—Сементей, В. Тоймак, Йуман, Йеник, Киремет Петти,

**Сунтал** политтĕкпа опђăлăх ыйтăвĕн тĕп сатађĕсене çутатса тăрат̆. Литтераттурăна сотсиалисăмшăн кĕрешес ĕçре партти аллинђи витĕмлĕ хĕçпăшал тăвас çулпа илсе пырасшăн çапăçат̆.

**Сунтал** литтераттурă тата ытти пур искусствă фронтĕнђе те пољшевисăмăн пысăк искусствишĕн кĕрешсе пырат̆; искуствăн мусăк, театтăр, кино, исо—рекконструксиллĕ тапхăрти тĕп сатађсене çутатса парат̆.

**Сунтал** сотсиалисăмлă ĕç паттăрĕсене илемлĕ происветенисем урлă кăтартассине нимрен мала хурса конкретлă ĕç керойĕсене, конкретлă сотсиалисăм çĕнтерӳсене анлă происветенисем урлă çутатса парат̆.

**Сунтал** уйрăмăнах литтераттура ђĕннĕ утарнĕксене литтераттурă ĕçĕпе тађăрах çыхăнтарас май вĕсен происветенисене мала хурсах пиђетлет.

**Сунтал** романсем, калавсем, трамăсем, ођђĕрксем, сăвăсем, стат̆йасем çапса вĕсем урлă вулакансене ђăваш ĕçхалăхĕн сотсиалисăмла рекконструкси тапхăрĕнђи хастарлăхĕпе çитĕнĕвĕсене çутатса парат̆.

**Сунтал** савăтсен тата краштăн вăрçи историсене çырса çутатасси йенђен малти ĕрете тăрса ĕçлет.

**Сунтал** вырăссемпе ССРС-ђи ытти вак халăхсен литтераттурипе, куљттурипе паллаштарат̆.

**Сунтал** хăй тавра литтераттурă вăйĕсене пухса, йертсе пырат̆. Çырма пуçлакансене вĕревтсе тăрат̆, вĕсен пултарулăхĕсем тăрăх консуљттатси парат̆ тата уйрăм литкрушоксен странитсисенђе çырма пуçлакансен пултарăвĕсене кăтартса парат̆.

**Сунтал** науккăпа технĕккăн çĕнĕ хыпарĕсемпе паллаштарса тăрат̆. Çĕнĕрен тухнă кĕнекесене хак парат̆. Илемлĕ йурăсемпе ӳкерђĕксем пиђетлесе пырат̆.

Кусемсĕр пуçне „Çунтал" çине ăслăлăхпа тĕпђев инçтитутĕнђе ĕçлекенсем, иншенерсемпе технĕксем, литтераттурăна ђĕннĕ рапођђи тата колхоçнĕк утарнĕксем, пром. претприйаттисене йертсе пыракансем, краштăн вăрçинђе пулнисем—Хĕрлĕ çар керойĕсем çырса тăраççĕ.

Шурнала илемлетес тĕлĕшпе мĕнпур палăрвă хутошнĕксем—Ахрр Ђăваш филиалĕнђе тăракансем тата паллă фотокрăфсем хутшăнса ĕçлемелле.

Хумма Çеменĕ, Ç. Йалавĕн, Ишетер, Утмăл Турат, Рсай т. ыт. те.

Пйессă çыракансем: Н. Айсмăн, В. Алакĕр, Н. Мраӈкка, П. Н. Оçĕппăв, Лашман, И. Миххайлăв т. ыт. те.

Поетсем: Елкер, Уйăп Мишши, И. Тукташ, В. Ахтупай, А. Петтоки, Н. Йанкас, Н. Ваçанкка, Н.Шупуççынни Краснов—Кĕçĕнни, Çулĕç, М. Ђамаӈ, Наманкан, Есрел, Митта, Ĕçхĕл, Митти Кеоркийĕ, Тумилин, Ухсай, Илле Иванĕ, Курак, Çаваç, Пиктемир, Пенеп, Хусанкай, Тăхти, Усли, Шелепи тата ыттисем те.

Мыскараç сем: Иван Муђи, Аттай, И.Йевтоккимăв, Ђурпай, Шăпђăк, Етмен, Кашлинке, Митта Петри, Калай, Ĕлмен Петĕрĕ.

Йурăпа йурă çинђен çыракансем: Çт. Макçимăв, Воропйов, В. Кривоноссăв, Капĕр, | Ф. Павлăв, | И. Љуплĕн т. ыт. те.

ЂППА çумĕнђи пролеттари мусăк çекси ђленĕсем, творђĕствă пĕрлешĕвĕпе Мусăк технĕккăмĕнђи происвотствă коллективĕнђи çамрăксем— Ф. Луккин, К. Хирпиккăв, Ђерныщшов, Орлов, Филиппăв, Йатмассăв т. ыт. те çырса тăраççĕ.

## Потпискă пуштă уйрăмĕсем урлă çырăнса илмелле

**Кĕнеке киоскисенђе те илме пулат̆**

**ШУРНАЛ ХАКĔ:**

**1 уйăха—30 п., 3 уйăха—90 п., 6 уйăха—1 т. 80 п. Çулталăка—3 т. 60 п.**

**УЙРĂМ № ХАКĔ 30 ПУС**

# Туйа инĕ вĕçлĕ

Кăпиталисăм тĕнђи çĕр ђăмăрĕн ђылай вырăнĕсенђе тупăсем калаçма тытăннă условисенђе, ђылай вырăнсенђе „тупăсем хăйсемех калаçма пуçланма пултаракан“ условисенђе 1931-мĕш çула пĕтерсе, 1932-мĕш çула тухăт. («Исвеçти» хаçатран).



**Кăпиталис.** Вăрçă ваљљи кирлисене пурне те хатĕрлесе çитерсен, тупăсем хăйсемех калаçма тытăнĕç

**Рапођђи.** Ăçта? Фронтра мар пуљ? Тылра пуљ!